«Халӑх тӑрӑшнипе – патшалӑх пулӑшнипе»

# Ҫынсен пуҫарӑвӗ тӑван тӑрӑха хӑт кӗртет


Анаткас Хачӑкра шыв башни лартаҫҫӗ.

**Москакасси территори пайӗн пуҫлӑхӗ Денис Кириллов пуҫарулӑх бюджечӗн проекчӗсене пурнӑҫлани пирки каласа парать:**

– Москакасси территори пайӗнче паян пуҫарулӑх ӗҫӗсем хӑй еккипе пымаҫҫӗ. Кунта ҫынсене пурӑнма, ӗҫлеме тата канма, хӑйсен пушӑ вӑхӑтне усӑллӑ ирттерме лайӑхрах условисем туса парасси, ялти пурнӑҫ хӑрушсӑрлӑхне туллин тивӗҫтересси тӗп задача пулса тӑрать. Ӑна пурнӑҫлассине территори пайӗнче пурӑнакансем пӗрлехи ӗҫ тесе йышӑнаҫҫӗ. Хӑйсен тӗп ӗҫӗсене йӗркелесе пынӑ чух яваплӑ ӗҫченсем паян шӑпах ҫак тӗллевсене тӗпе хурса тӑрӑшнинчен тӗлӗнмелли ҫук. Пирӗн ялсенче пурӑнакансем пӗр чӑмӑра пӗрлешсе малашлӑха пӑхса вӑй хунӑран территори пайӗнче хальхи вӑхӑтра усӑ курмасӑр пушӑ выртакан е хуҫасӑр ҫӗр лаптӑкӗсем ҫукпа пӗрех. Ҫакӑ пире ыранхи куна пӑхса пурӑнма хавхалантарать. Пирӗн округри 16 ялта пурӑнакансем те ҫакна лайӑх курса тӑраҫҫӗ, пӗрлехи ӗҫе аван ӑнланаҫҫӗ.

Малашлӑха пӑхса ӗҫленӗ май аталану ҫулӗсем те уҫӑлсах пыраҫҫӗ. Ял халӑхӗн пӗрлӗхӗ яланах тӗп вырӑнта тӑрать. Кун пек ӗҫлесен патшалӑх пулӑшӑвӗ витӗмлӗ пулнине те ял ҫынни ӑнланчӗ. Унпа вӑл паян туллин усӑ курма тӑрӑшать. Ҫак ӗҫ ялсен малашлӑхӗпе ҫыхӑннине лайӑх ӑнланатӑп. Кунта ялта пурӑнакансем пӗр тӗллевлӗ пулни вӗсен тӗрлӗ пуҫарӑвӗсене ытларах ҫул пама пулӑшнине палӑртатӑп. Ҫӗнӗлӗхсене ҫул пама паян пуҫарулӑх бюджечӗ ытларах пулӑшнине палӑртатӑп. Ялсен таврашне, урамсене малашлӑха пӑхса тирпей-илем кӗртессинче, ытларах ҫӗнӗлӗхе пурнӑҫ парассинче вырӑнти халӑх пӗр тӗллевлӗ кар тӑрса ӗҫленинче куратӑп.

Кӑҫал хамӑр енре асӑннӑ пуҫарулӑх бюджечӗн программине хутшӑнса 5 ӗҫ пурнӑҫларӑмӑр. Вӗсем кашниех Москакасси территори пайне хӑтлӑрах тӑвассипе ҫыхӑннӑ. Ҫакна шута илсе эпир ҫынсене ӗҫмелли шывпа тивӗҫтерессипе, урам хушшинчи ҫулсене юсассипе ҫине тӑрса ӗҫлерӗмӗр. Пурнӑҫланӑ ӗҫсенче ял старостисен, вырӑнти активистсен, пуҫаруллӑ ҫынсен тӑрӑшӑвӗ пысӑк вырӑн йышӑнать. Сӑмах ҫаврӑнса ҫитнипе кашни пуҫарулӑх бюджечӗн проекчӗ ҫинчех уйрӑммӑн чарӑнса тӑрам-ха. Асӑннӑ 5 проектран виҫҫӗшӗ ялсенчи шыв пӑрӑхӗсене юсаса ҫӗнетессипе ҫыхӑннӑ. Кашнинчех патшалӑх пулӑшӑвӗпе те, ял ҫыннисен тӑрӑшулӑхӗпе те ытлӑ-ситлӗ усӑ курма май килчӗ. Ҫапла вара ҫуллахи уяр кунсемпе туллин усӑ курса Ахманери шыв пӑрӑхне «Спецтеплогрупп» чикӗллӗ яваплӑхлӑ общество кӗске вӑхӑтра юсаса пачӗ. Ӑна пурнӑҫлама 452658,78 тенкӗ кирлӗ пулсан, ял ҫыннисен пулӑшӑвӗ 45265 тенкӗ пулчӗ. Ытти – вырӑнти бюджетран пӑхнӑ укҫа-тенкӗ тата Чӑваш Республикин хыснинчен уйӑрнӑ субсиди.

Мӑрсакассинчи шыв пӑрӑхне юсасси 2138266,05 тенкӗне ларчӗ. Халӑх ҫак ӗҫе хывнӑ укҫа-тенкӗ виҫи 213826,60 тенкӗпе танлашрӗ. Ҫав вӑхӑтрах Анаткас Хачӑкри шыв башнипе шыв пӑрӑхне юсасси 3741827,78 тенкӗ пулчӗ. Анаткасхачӑксем ӗҫмелли шыв пахалӑхне лайӑхлатма хӑйсен укҫи-тенкине 374182,78 тенкӗ пухса пачӗҫ.

Ялсенче пурӑнакансем пуҫарулӑх бюджечӗн программин майӗпе ҫулсем юсассипе те алӑ усса лармарӗҫ. Ҫапла вара иртнӗ ҫу кунӗсенче Ахманери тӑватӑ урама тата Ҫӗлеменкассинчи Тӗп урама ҫӗнӗ сӑн кӗртрӗмӗр. Ахманери ҫулсене юсама 3619417,03 тенкӗ, Ҫӗлеменкассинчи Тӗп урама юсама 1404790,84 тенкӗ тӑкакларӑмӑр.

Маларах асӑннӑ ӗҫсенче ял старостисемпе уйрӑм ҫынсем активлӑ пулнине палӑртатӑп. Вӗсем: Ахманере – Петр Волковпа Эдуард Воробьев, Ҫӗлеменкассинче – Валентина Соколова старостӑпа ӑна пулӑшакан Владислав Сучков тата Валерий Николаев, Анаткас Хачӑкра – Вера Тимофеева старостӑпа Эдуард Семенов электрик, Мӑрсакассинче – Елена Овчинниковӑпа Любовь Овчинникова тата ял халӑхне пулӑшнӑ Петр Терентьев индивидуаллӑ предприниматель. Активистсене, ҫак ӗҫрен катара тӑман ял ҫыннисене пурне те паян тав сӑмахӗ калатӑп.

Ялсене ҫӗнӗ хӑт кӗни вӗсен пуласлӑхӗ пуррине, унта пурӑнакансем малашлӑха пӑхнине ҫирӗплетет. Ҫакна ял ҫыннисем ӑнланса пурӑнасса шанатӑп.


Ахманери ҫӗнӗ ҫулпа утма кӑмӑллӑ.

# Малашлӑхшӑн Шетмӗпуҫ енче пӗрле вӑй хураҫҫӗ

***Малашлӑха пӑхакансене, ҫӗнӗлӗхсемпе туслӑ ҫыхӑну тытакансене ҫак ӗҫре патшалӑх та тӗрлӗ программӑсемпе вӑхӑтра пулӑшать. Ҫакна хӑйӗн сӑмахӗнче Шетмӗпуҫ территори пайӗн пуҫлӑхӗ Борис ВАСИЛЬЕВ та тулли кӑмӑлпа палӑртрӗ. Хамӑрӑн калаҫура Борис Арефьевич ытларах Шетмӗпуҫ тӑрӑхӗн паянхи аталанӑвӗ пирки, ҫывӑх вӑхӑтра пурнӑҫламалли ӗҫсем тата вӗсене пурнӑҫламалли мелсем ҫинче чарӑнса тӑчӗ. Хӑйӗн сӑмахӗнче вӑл ялта пурӑнакансен пуҫарулӑхӗпе вырӑнти активистсен ӗҫченлӗхне те палӑртрӗ, вӗсем пурнӑҫ ыйтнипе тан пыма тӑрӑшнине, ҫакӑ ялта пурӑнакансене тата активлӑрах пулма хистенине ҫирӗплетрӗ. Ҫакӑ вара ку тӑрӑхра пурӑнакан ҫынсен ыранхи куна пӑхса ӗҫлеме пулӑшать.***

**– Борис Арефьевич, хӑвӑр ял тӑрӑхӗн паянхи социаллӑ пурнӑҫне сӑнласа парӑр-ха. Кашни ял тӗлӗшпех кая хӑвармасӑр татса памалли ыйтусем пур-и?**

– Территори пайӗн тытӑмӗнче 8 ял вырнаҫнӑ: Шетмӗпуҫ, Катӑкуй, Карманкасси, Мӑн Турхан, Сарчак, Автанкасси, Тивӗш, Опрыськъял. Вӗсенче паян пин ҫын ытла пурӑнать. Ялта пурӑнакансен ыйтӑвӗсене пахалӑхлӑ тивӗҫтерме Шетмӗпуҫӗнчи пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан тӗп шкул (ача сачӗпе пӗрле), Шетмӗпуҫӗнчи Культура ҫурчӗ, амбулатори, фельдшерпа акушер пункчӗ пур. Вӗсемпе пӗрлех ял тӑрӑхӗн территорийӗнче тӗрлӗ сферӑра 16 индивидуаллӑ предприниматель вӑй хурать, ҫӗр ӗҫӗпе Мичурин яч. хис. агрофирма тата икӗ хресчен (фермер) хуҫалӑхӗ ӗҫлеҫҫӗ. Ҫынсене куллен кирлӗ таварпа тивӗҫтерме ялсенче 6 магазин пур. Пурте хӑйсен умӗнчи тӗллевсене вӑхӑтра тата пахалӑхлӑ пурнӑҫлаҫҫӗ. Ҫакӑнтан вӗсем ыранхи куна шанса пурӑнни курӑнать.

**– Ялсен паянхи пурнӑҫӗпе умри малашлӑхӗ пирки сӑмах пуҫарар-ха. Кунта ыранхи куна пӑхса мӗн калама пултаратӑр?**


Автанкасси ҫулӗ яла хӑт кӗртет.

– Вырӑнлӑ ыйту тесе шутлатӑп. Малтанах юлашки ҫулсенче Чӑваш Республикинче ялта пурӑнакансен пуҫарулӑх проекчӗсене ҫул панине ырӑ ен тесе хаклас килет. Хамӑр территори пайӗнче те эпир пурнӑҫпа тан пыма тӑрӑшатпӑр. Ҫапла вара кӑҫал ҫеҫ патшалӑх пулӑшӑвӗпе усӑ курса хамӑр территори пайӗнче 7 пуҫарулӑх бюджечӗн проектне ҫул патӑмӑр. Пуринне те подрядчикӗсене ҫирӗплетнӗ. Вӗсем хӑйсен яваплӑхне туйса ӗҫлерӗҫ, тӑрӑшаҫҫӗ те. Ӗҫсен кашни утӑмне ялта пурӑнакансем алӑ тупанӗ ҫинчи пек курса тӑнӑран умри тӗллевсем вӑхӑтра пурнӑҫланасси пирки манӑн паян пӗр иккӗленӳ те ҫук.

**– Асӑннӑ проектсемпе кӗскен паллаштарӑр-ха?**

– Хирӗҫлеместӗп. Шетмӗпуҫ территори пайӗнчи ҫичӗ пуҫарулӑх бюджечӗн проекчӗнчен тӑваттӑшӗ ялсенчи ҫулсене юсассипе ҫыхӑннӑ. Ӗҫсем кал-кал пынӑран юсав ӗҫӗсем ҫывӑх вӑхӑтрах вӗҫленмелле тесе шутлатӑп. Пӗрремӗш объект – Турхан ялӗнчи 1-мӗшпе 9-мӗш тата 41-мӗшпе 51-мӗш ҫуртсем тӗлӗнчи ҫула юсасси. Ӗҫ хакӗ – 1264917 тенкӗ ытларах. Юсав ӗҫӗсене Александр Данилов индивидуаллӑ предприниматель организацийӗ пурнӑҫлать. Иккӗмӗшӗ – Турхан ялӗнчи Садовая урамран Мичурин урамне кӑснӑ вырӑн. Кунти ӗҫсене пурнӑҫлассишӗн те асӑннӑ индивидуаллӑ предпринимателӗн ҫул тӑвакан организацийӗ яваплӑ пулса тӑрать. Ӗҫ хакӗ – 1248651 тенкӗ. Ҫак индивидуаллӑ предпринимателӗн виҫҫӗмӗш объекчӗ – Автанкассинчи Комсомольская, Пионерская тата Набережная урамсенчи ҫулсене юсасси. Ку ӗҫсене технологипе килӗшӳллӗ пурнӑҫлама 3437204 тенкӗ те 21 пус пӑхса хӑварнӑ. Тӑваттӑмӗш объект – Сарчак ялӗнче пушар вӑхӑтӗнче шыв илмелли вырӑна тасатасси. Ӑна Алексей Николаевич Тимофеев индивидуаллӑ предприниматель организацийӗ пурнӑҫлама йышӑнчӗ. Контракт хакӗ – 613192 тенкӗ ытла. Хамӑр территори пайӗнчи ялсене тирпей-хӑт кӗртмелли пилӗккӗмӗш объект – Тивӗшри Южная, Новая урамсенче тата Чебоксарская урамри 32-мӗш ҫуртран 52-мӗш ҫурт таран шыв пӑрӑхӗ юсасси. Контракт хакӗ – 2 миллион та 7 пин те 569 пин тенкӗ. Ку объект подрядчикӗ – Павел Владимирович Колесников индивидуаллӑ предприниматель. Улттӑмӗш объект – патшалӑх пулӑшнипе ҫул-йӗр фондӗнчи укҫа-тенкӗпе усӑ курса Турханта 110 метр тӑршшӗ ҫула тикӗслесси. Кунти ӗҫсемшӗн «Гудвил» чикӗллӗ яваплӑхлӑ общество ответлӑ пулса тӑрать. Пирӗн территори пайӗнче кӑҫал хута каймалли 7-мӗш объект вӑл – Турхан ялӗнчи шыв башни тавра карта тытса ҫаврӑнасси.

Пӗлтерӗшлӗ ку ӗҫре пире Павел Колесников индивидуаллӑ предприниматель пысӑк тӗкӗ пачӗ.

**– Эпӗ эсир палӑртнӑ пур ӗҫ те кӑҫал хута каймаллисем тесе шутлани тӗрӗсех пулать-ши?**

– Патшалӑх пулӑшӑвӗпе туллин те вырӑнлӑ усӑ курса хамӑрӑн территори пайне ҫултан-ҫул хӑтлӑрах, илемлӗрех тӑвасси – вырӑнта пурӑнакансемпе канашласа тунӑ пӗрлехи ӗҫ. Кашни объектри ӗҫе кӑҫал эпир халӑхпа канашласа пуҫартӑмӑр, подрядчиксем тытрӑмӑр. Пурте пӗр тӗллевлӗ вӑй хунӑран ӗҫсем те кал-кал пычӗҫ. Кунпа пӗрлех ҫитес ҫул валли те плансем ҫуралчӗҫ. Тавах пире ӑнланакансене, вӑхӑтра пулӑшакансене, пӗрлехи ӗҫрен айккинче юлманнисене. Ялсен малашлӑхӗ тата пуласлӑхӗ унта пурӑнакансем пӗр тӗллевлӗ пулнинче тесе шутлатӑп. Хӑтлӑ пурнӑҫшӑн Шетмӗпуҫ территори пайӗнчи ялсенче пурӑнакансем пӗрле вӑй хуни ҫӗнӗ ӗмӗтсем ҫуратать. Пӗрле пулсан вӗсем те пурнӑҫланӗҫ.

**Проект Чӑваш Ен Цифра министерстви пулӑшнипе пурнӑҫланать.**